25-80 2-1

Пĕтĕм тĕнчери пролеттарисем, пĕрлешĕр!

Р. Ф. С. С. Р.

2-1

ЧĂВАШСЕН АХТОНОМИЛЛĔ СОТСИАЛИСĂМПА СОВЕТ РЕСПУПЛĔК

ĔҪТĂВКОМĔН

# ПИЛĔК ҪУЛ ХУШШИНЧИ ĔҪĔСЕМ.

(Ийулĕн 6-мĕшĕнче Илларионăв йул. тунă токлат).

«КАНАШ» хаҫат ҫумĕнче тухнă.
ШУПАШКАР—1925.

Типография
«ЧУВАШСКАЯ КНИГА»
Чебоксары, Б. Советская, 6.

Чувашлит № 1372

Тираж 4.100 экз.

## Пилĕк çул хушшинҫи ĕçсем.

Йулташсем, епĕр ĕнтĕ шăп 5 çул хамăрăн ирĕкпе пурăнатпăр. Пайанхи кун çак ҫаплă саççетанинҫе хамăр Оплăçăн, халĕ респуплĕкĕн, Ĕçтăвкомĕ 5 çул хушши мĕн-мĕн туса çитернине, тата малашне мĕскер тумаллине пăхса тухăпăр.

Йулташсем, çак 5 çул хушшинҫе Ахтономиллĕ Ҫăваш Оплăçĕ хăй пур пăçĕнҫе мĕнле ҫăрмавсемпе йăвăрлăхсем тĕл пулнине есĕр те, епĕр те лайăх пĕлсе тăратпăр. Ҫăрмавсем нумай, тата тĕрлĕ вăхăтра тĕрлĕ пулҫĕç.

### Вăрçăллă комунисăм вăхăҫĕ.

Çав йăвăр вăхăтсенҫен пĕри—вăрçăллă комунисăм вăхăҫĕ. Вăл вăхăтра пирĕн ҫăваш ĕçлĕ çыннисем Хусантаҫĕ, вĕсем Ахтономиллĕ Оплăç орканисатсилесшĕн тăрăшатҫĕç. Ҫăваш оплăçĕ пуçланса кайни çав вăхăтпа çыхăнса тăрать. Вăрçăллă комунисăм вăхăтĕнҫе пирĕн çамрăк Оплăçăн хуçайствине ура çине тăратма нимĕнле те май килмерĕ, мĕншĕнне хăвăр та лайăх пĕлетĕр.

Пирĕн респуплĕк çĕршывне пур йенҫен те тăшмансем çавăрса илнĕҫĕ: йут патшалăх пуршуаçийĕ те, шалти контр-револютсионерсем те тапăннăҫĕ. Çавăнпа ĕçлекенсемпе хресҫенсен правиттĕлствин ҫăн малтан вĕсене çĕмĕрсе тăкмалла пулҫĕ; унтан вăрçă ҫарăнсан тин лăпкă пурнăçра хуçайствăна хăпартма тӳрĕ килҫĕ. Çав вăхăтра, йулташсем, пирĕн Ҫăваш Ĕçтăвкомĕ те—патшалăх аппараҫĕ пулса тăнăскерĕн—протрасверсткă, лавҫупу нормине тултарас ĕçре тата вăрлăх кампанийĕсене иртгернĕ çĕртә пĕтĕм вăйпа ĕçлемелле пулҫĕ.

Çак виçĕ ыйгу ун ҫухне тĕп сатаҫ, ҫăн кирлĕ ĕç пулса тăҫĕ. Ҫăваш Оплăçĕпе унăн Ĕçтăвкомĕ çав сатаҫсене пурнăçа кĕртеймен пулсан, пирĕн çамрăк ахтономи хăйĕн тĕрексĕрлĕхне, хăйĕн вăйсăр ĕçне, пултарусăрлăхне çеç кăтартнă пулĕҫҫĕ. Анҫах çак йăвăр сатаҫсене, йулташсем, çак патшалăх ыйтăвĕсене, ытлашши хĕн асапа килсен те, вырăнти ĕçлекенсем, тата хресҫенсем хăйсем пулăшнипе пирĕн Ҫăваш Оплăçĕ пурнăçа кĕртсе пыҫĕ. Ĕнтĕ паллах, вăрçăллă комунисăм вăхăтĕнҫе, пĕтĕм вăйран протрасверскă, лав, тата вăрлăх кампани нурмине тултарма тăрăшнă ҫухне, пирĕн хамăрăн йал хуçайствипе çĕмĕрĕк промышлĕннăçа йусасси çинҫен шухăшлама та вăхăт пулман.

### Выçлăх.

Унтан, вăрçăллă комунисăм хыççăн, Ҫăваш Оплăçне халиҫен историре пулман инкек килсе хупларĕ; ку, йулташсем,—выçлăх. Есĕр хăвăр та астăватăр, 21-22-мĕш çулсенҫе анатри Атăлпа вăтам Атăла тискер выçлăх тапăвҫĕ; çав выçлăх пирĕн Ҫăваш Оплăçне те çавăрса илҫĕ. Çав çулсенҫе пирĕн

ҫăваш Ĕҫтăвкомĕн хăйĕн пĕтĕм вăйхалне выҫлăхпа кĕрешме хумалла пулҫĕ. Есĕр астăватăр пулĕ, йулташсем, йепле пирĕн ҫăваш хресҫенĕсем йулашки выҫăх-ҫĕрлĕхне, ҫуртйĕрне сутса вилĕмрен хăтăласшăн асапланнине. Каламасăр хăварас мар: етем ҫини те пулҫ³. Ҫав хăрушă кунсенҫе пирĕн Ĕҫтăвкомăн, ăҫтан та пулин ҫăкăр-тырă тупса, хамăр оплăҫри хресҫенсене вилĕмрен хăтармалла пулҫĕ.

Ҫав кĕрешӳре, пирĕн Ҫăваш Ĕҫтăвкомĕ, тата вырăнти влаҫсем те хытă тăрăшса ĕҫленипе, епĕр ытла йăвăр ҫĕклем айнех пулмарăмăр. Пирĕн Ĕҫтăвком ҫĕннине тырă-пулă, ăннă кĕпĕрнесем те, ҫенттăр та илтрĕ. Ҫăваш Ĕҫтăвкомĕ пулăшу илсе тăра пуҫларĕ; мĕн пур пек тырăпулла вăл оплăҫри хресҫенсене салатрĕ; унпа ҫитĕннисене те, аҫа-пăҫасене те темиҫе пин ҫăлса хăварҫĕ. Ҫав хайар выҫлăх ҫулсенҫе пирĕн Ĕҫтăвкомăн каллех хресҫен хуҫайствине ҫирĕплетес ĕҫе хăвармалла пулҫĕ. Ăҫтан ун ҫинҫен шухăшламалла: хресҫен йулашки выҫăх-ҫĕрлĕхне хаксăрах сутса йараҭ, йе пусса ҫийет. Ҫак 2-мĕш вăхăт—выҫлăх пирĕн оплăҫшăн историллĕ самана. Епĕр ăна ҫасах манас ҫук. Ҫав вăхăтра тырăпулă шырама Ĕҫтăвком комантироваҭ тунă тĕрлĕ кĕпĕрнесенҫе пулнă йулташсем нумайĕшĕ ҫирлесе виле-виле йулнă; ыттисем суранланса, лутăрканса пĕтнĕ; вĕсем пайан кун та ҫирлĕ. Тата хресҫен хушшинҫе мĕн ҫухлĕн вилҫĕҫши? Епĕ сире ҫихвăрсене кăтартса тăмăп, анҫах ҫакна ҫеҫ калăп: ҫав хăрушă ҫулсенҫе йут кĕпĕрнесене туха-туха тарнă хресҫенсем вилĕмрен хăтăласшăн асапланнине кăтартаҭ.

## Виҫҫĕмĕш вăхăт—выҫлăх йулашкисемпе кĕрешни.

Кун хыҫҫăн Ĕҫтăвком та, пирĕн Оплăҫ пĕтĕмĕшпех хăй те, 3-мĕш вăхăт патне ҫывăхараҫҫĕ. Ҫав вăхăт—выҫлăх йулашкисемпе кĕрешни.

Выҫлăх пирĕн Оплăҫ хуҫайствине ҫылай йухăнтарҫĕ. Хресҫен хуҫайствине вăл пĕтĕмпех пĕтерсе лартрĕ, темелле. Ҫавăнпа пирĕн Ĕҫтăвкомăн, выҫлăх иртнĕ хыҫҫăн, унăн йулашкисемпе ҫылай вăй хурса хытă кĕрешмелле пулҫĕ. Ҫак йăвăр кĕрешӳве Ĕҫтăвком мĕнле ҫулсемпе йертсе пырса, выҫлăх йулашкисене йепле йусаса ҫитерҫĕши? Епĕр пĕлетпĕр: хăрушă выҫлăх ҫул пирĕн мĕн пур, саппас укҫа тенкĕ, тырăпулă пĕтсе ҫитрĕ. Каллех пирĕн Ĕҫтăвкомăн ҫенттăрти уҫрештенисенҫен, хамăрăн Оплăҫри ҫухăн хресҫен халăхне ҫĕклеме пулăшу ыйтмалла пулҫĕ. Каласах пулаҭ: ҫак виҫҫĕмĕш вăхăтра та пирĕн Ĕҫтăвком ĕҫе майлатех. Вăл выҫăх-ҫĕрлĕхе тăрантса усрама та, халăха валли те, йалхуҫайствине ҫирĕплетме те, промышлĕннăҫа йусама та—патшалăхран пулăшу илет. Ҫав вăхăтри пулăшу ак ҫапла салаваҭҫĕ: ҫăн малтан кунта халăха ахалех вăлеҫсе панăҫҫĕ. Пирĕн Ĕҫтăвком ҫав пулăшупа халăха ĕҫ парас йĕркепе мĕн те пулин пысăкрах йапала тума тăрăшаҭҫĕ. Анҫах мĕн тунăха? Малтанах нимĕнех те туман пек курăнаҭ. Ҫапах лайăхрах пăхсан епĕр ак мĕн курăпăр: ҫав пулăшупа епĕр пăртаксă та пулин хамăрăн ҫухăн промышлĕннăҫа хăпартрăмăр. Ҫав укҫа тенкĕпе Опĕҫтăвком „Етинствă" хапрăкне, Йетĕрнери ҫу савăтне, т. ыт. те йусаса ĕҫлемелле турĕ. Ҫак претприйаттисене мĕншĕн йусамаллаҫĕха?—Пĕр йенҫен, вĕсене йусасан епĕр хресҫенсене тупăшлă ĕҫ тупса патăмăр. Тепĕр йенҫен, унҫухне пирĕн копператсе, т. ыт. ĕҫсене те пулăшмалла пулнă. Ҫапла ĕнтĕ пирĕн шухăш пулнă:

пĕри—йепле те пулин, хуллен пулсан та, хамăрăн предприйаттисене тĕреклетесси; тепĕр сăлтавĕ—ушкăн ĕçсем тупса парса, оплăçри хресҫен халăхне йут кĕпĕрнесем тăрăх выçăхса, ҫирлесе çÿремешкĕн пăрахтарасси.

## Оплăç хуçайстви ҫĕрĕле пуçлани.

Малалла епĕр, йулташсем,—1923-24 çулсенҫе—хуçайствăна ҫĕртсе йерипен çĕклеме пуçларăмăр. Пирĕн Ҫăваш Оплăçĕнҫе хуçайствăна та, культурăна та, хăвăрт малалла йама хал çук. Çавăнпа 3—4 çул хушшинҫе, йепле тăрăшсан та, ытлашшийех тумалла мар. Хресҫен хуçайствине йусаса, ҫăваш промышлĕннăçне ура çине тăратас тесен, йулташсем, нумай çул кирлĕ. Кунта вăрахăн, йĕркеллĕн ĕçлесе пымалла. Çапах та епĕр пайан кун, Ҫăваш Оплăçĕн 5 çулне уйавланă ҫух, пирĕн хуçайствăпа промышлĕннăç хăпарнине кăтартакан ҫыхвăрсем куратпăр; ҫăваш хуçайстви йерипен, анҫах кунран кунах çирĕпленсе малалла шăваĭ.

## Йалхуçайстви.

Илĕпĕр пирĕн йалхуçайствине. 1920-21-22-мĕш çулсенҫе акăнмасăр йулнă çĕр 30% пулнă пулсан, 1923-24 çулта çав проҫăн ҫакса 5% çеç тăрса йулаĭ. Йулашки вăхăта 1924-25 çула илсен пирĕн Ҫăваш Оплăçĕнҫе пĕр пăрусна çĕр те акăнмасăр йулни курăнмасĭ. Йалхуçайствин уйрăм пайĕсене илсен те, епĕр ĕç малалла пынине куратпăр. Сăмахран—выҫăх-ҫĕрлĕх ĕрҫетес ĕçех илĕпĕр. 1921-22-мĕш çулсенҫе пирĕн оплăçри лашасăр, ĕнесĕр хуçайствăсем 65 % ытларах пулнă. Йулашки ҫихвăрсем пире выҫăх-ҫĕрлĕх (лаша, ĕне) йерипен хунаса ĕрҫенине кăтартаççĕ. Лашаллă хуçайствăсем 1920 çулта нумайрах пулнă; 1921-22-мĕш çулсенҫе вĕсем ҫылай ҫакрĕç; халĕ ĕнтĕ—йерипен ÿссе хăпарса пыни курăнаĭ. 1919-20 çулсенҫи ҫыхвăра çитейменха епĕр; çапах хуллен малтан малах шуса пыратпăр. Ĕнеллĕ хуçайствăсене уйрăм илсен, тÿрех калас пулаĭ,—ÿссе йышлăланса пыни курăнаĭ. Йулашки ҫихвăрсем ак çапла кăтартаççĕ: пирĕн Ҫăваш Республĕкĕнҫе 1924-мĕш çул 38% лашасăр хуçайствă пулнă. Ĕнесĕррисем 1925 çула 32% йулнă. Çапла ĕнтĕ пирĕн лашасăр, ĕнесĕр хуçайствăсем нумайха. Выҫăх-ҫĕрлĕх ĕрҫетес ĕç вăрçăҫенхипе мар,—1919-20-мĕш çулхипе те танлашаймасĭха.

## Çĕр йĕркелес ĕç.

Халĕ йалхуçайствин ытти йенĕсене, сăмахран çĕр йĕркелес ĕçе илсен, çакна калас пулаĭ: Октăпĕр револютсин малтанхи кунĕсенҫе те, Ҫăваш Оплăç пуçлансанах та, хресҫенсем çĕр йĕркелес ĕçе хапăл тумасĭҫĕç пулсан,—йулашки ҫихвăрсем хресҫен кăмăлĕ пĕтĕмпех урăхлине кăтартаççĕ. Халĕ пирĕн хресҫенсем çĕре йĕркелесе нумай пусăллă уйа куçасшăн тăрăшни, курăнаĭ. Çĕр йĕркелес ĕç пирĕн çамрăк Ҫăваш Республĕкĕнҫе 1922-23-24, тата йулашки 1925-мĕш çулсенҫе сарăлса пыҫĕ. Анҫах çак 3 çул хушшинҫе епĕр Ҫăваш Оплăç çĕрĕн 129.000 теçеттинине çеç йĕркелесе çитернĕха. Ку пысăк ҫыхвăр пек, çапах та вăл 50% çитеймест,—39%-ран та кайа. Çĕре пĕтĕмпех йĕркелесе çитерес тесен Ҫăваш Ĕçтăвкомĕпе Çĕр Управленийĕн ҫылай вăй

хумалла пулаť. Хамăр плана пурнăçа лайăх кĕртсе пырсан та, çуллен 50 пин теçеттин йĕркелесен—çĕр ĕçне епĕр 5 çулсăр пĕтереймĕпĕрха.

## Нумай пусăллă уй.

Çĕр йĕркелесси çинҫен каласнă ҫухне тата, йулташсем, нумай пусăллă, уй çинҫен пĕрик сăмах каласа хăварам. Ку ыйту пирки пурте,—Ҫăваш Оплăçĕ ытти оплăçсемпе респуплĕксенҫен кайа йулнă,—теççĕ. Тĕрĕс, йулташсем: епĕр хамăр пурнăç хĕсĕк пирки кунта та ытла пысăк утăмсемпех малалла утма пултараймастпăр. Анҫах епĕр çакна калама пултаратпăр: вăрçăллă комунисăмҫен пирĕн пĕр хуçайствă та, пĕр çын та нумай пусă çинҫен пĕлмен пулсан,—халĕ хамăр куç умĕнҫех нумай пусăллă уйа куçас ĕç сарăлса пынине куратпăр. 1924-мĕш çулта нумай пусăллă уйа пирĕн 3.813 теç. куçнă; 1925-мĕш çулта епĕр 10 пин теç. куçартăмăр. 10.000 теçеттин нумайах мар ĕнтĕ вăл; анҫах пирĕн Ҫăваш Оплăçĕшĕн пысăк вырăн йышăнса тăраť.

## Кретит.

Çĕр йĕркелес ĕçе, выҫăх-ҫĕрлĕх ĕрҫетессе, нумай пусăллă уйа куçасса, пĕр сăмахпа каласан йалхуçайствине пур йенҫен те йусаса тĕреклетес тесен, пире кретит кирлĕ. Кретитсăр епĕр хресҫен хуçайствине хăвăртах уралантарма пултараймастпăр. Хаҫ ак мĕнле ыйту: Ҫăваш Оплăçĕнҫе кретит пури? Кивçен парса пулăшу кӳме пултарайатпăрши епĕр? Ҫăнах та, йулташсем, оплăç пуçлансанах пирĕн кунта кивçенлĕх уҫрештенийĕсем çукҫĕ,—хаҫ ĕнтĕ ун пек уҫрештенисем 2: пĕри патшалăх панкки, тепри йалхуçайстви панкки.

Йалхуçайстви панкки пирки, йулташсем, епĕр хавасланса çакна калама пултаратпăр: малтанхи çул панк 26 пин тенкĕпе ĕçе тытăнҫĕ пулсан, 1924 ç. 1-мĕш Октăпĕре унăн укçи 240 пин тенке çитнĕ. Йулашки ҫихвăрсене илсен пирĕн й-х. панккин укçи 618 пин тенке çитни курăнаť. Хăй пуçланнăранпа ĕнтĕ й-х панкки кĕçĕн кивçенлĕх копперативĕсемпе йулташлăхсем урлă 1.228.536 тенкĕ салатнă.

Малтанах пăхсан 1.228.536 тенкĕ пысăк укçа пек; анҫах вăл пирĕн кирлĕ тăкаксен 4% çеçха. Кивçенлĕхе, кашни йулташлăх й-х. копперативвăҫҫи çителĕклĕ—100% памалла тăвас пулаť. Çавăнпа та пирĕн йалхуçайстви панккин ĕçри мулне темиçе хут ӳстермелле. Ăна труках ӳстерме хал çук. Çапах та епĕр й-х панккин мулĕ йерипен йусанса, хăпарса пынине куратпăр.

## Хресҫене машшин туйантарни.

Хаҫ хресҫене ĕçре кирлĕ йалхуçайстви машшинĕсем туйантарни çинҫен пĕрик сăмах каламалла пулаť. Патша вăрçипе краштăн вăрçи вăхăтĕнҫе пирĕн пĕр йалхуçайстви уҫрештенийĕ те, вĕсем хушшинҫе й-х. склаҫĕ те, ĕçлеместҫĕç. Хресҫенсем йаланах йалхуçайстви хатĕрĕсем ыйтса апратаťҫĕç. Пирĕн вĕсене илме укçа, çукҫĕ. Халĕ, йулташсем, хамăр оплăçре й-х. склаҫĕ уçăлнăранпа машшин туйантарас ĕç аванланса пыраť. Йалхуçайстви склаҫĕн мулĕ малтанхи çул 28 пин тенкĕ пулнă пулсан, 23—24 çулсенҫе çав ҫихвăр

92.000 тенке çитнӗ. 24—25 çулсем вара пирӗн й-х. склаҭӗн тӗп мулӗ 260.664 тенке çитни куранҭӗ. Кунта епӗр йалхуçайстви склаҭӗн мулӗ ӳснӗçемӗн, хресҭенсем тахçан кирлӗ машшинсем туйанса хуçайстваа йусама тытанниине асӑрхатпӑр.

## Страхховккӑ ӗçӗ.

Хаҭ тата пирӗн йалхуçайствине çыханса тӑрахан страхховккӑ ӗçӗ çинчен пӗрик сӑмах калама тивет пулӗ. Страхховккӑ ӗçӗ вӑрçӑҭен те пурҭӗ: анҭах краштӑн вӑрçи вӑхӑтӗнҭе вӑл йухӑнса хупланса ларҭӗ. Ӑна, тӗрлӗ инкек-синкек пулсан хресҭен хуçайствӑшӗн питӗ кирлӗ йапалана, правиттӗлствӑ каллех çӗнетсе йарасшӑн. Пирӗн хресҭен килçуртне, выҭӑх-ҭӗрлӗхне, анине страхаваҭ тумасӑр хӑварса питӗ нумай сийен кураҭҭӗ; страхховккӑ ӑна çӑлаҭ. Страхховккӑ пирки епӗр çакна çеç калама пултаратпӑр: Опласç орканисатсиленсенех пирӗн ҭӑваш çӗршывӗнҭе вӑл пулман. Страхховккӑ ӗçӗнҭе, епӗр Тутар респуплӗкне пӑхӑнса тӑнӑ. Вӑл тӗлӗшпе епӗр çакна калама пултаратпӑр: пирӗн хресҭенсен инкек-синкек сиксе тухсан, Тутар респуплӗкӗ вӗсене вӑхӑтлӑ пулӑшсах кайман; ун пирки вӗсем нумай ҭӑрманнӑ. Çавӑнпа пирӗн ҭӑваш ҭенттӑрӗ страхховккӑ кантурӗ кунтах уçас тесе сӑмах татрӗ. Халӗ ӗнтӗ пурте куратӑр страхховккӑ ӗçне пирӗн Ҭӑвашстрах майласа тӑраҭ.

Ҭӑнах та вӑрçӑ хыççӑн ку ыйту çӗнӗ ыйту пулса тӑҭе; пирӗн хресҭенсем страхховккӑ ӗçне ухатах йышӑнмарӗç. Вӑрахӑн ӳкӗтлесе, ӑнлантарса парсан тин ку ӗç пирӗн Ҭӑваш оплӑçӗнҭен сарӑлса кайрӗ. Епӗр хаҭ çакна куратпӑр: пирӗн вуткӑвартан 152.000 килӗ страхховаҭ тунӑ; выҭӑх-ҭӗрлӗхе ӳксе вилесрен 116.000 хуçайствӑра страхховаҭ тунӑ. Ку питӗ пысӑк ҭыхвӑр. Страхховккӑ ӗçне тин пуçланӑ çулсенҭе пирӗн 15.000-рен те кайа килçурт, 10—15 пин выҭӑх-ҭӗрлӗх страхховаҭ тунине, хаҭхипе танлаштарсан ӗç ҭӑнах, сарӑлса пыни куранаҭ. Ку ӗçре стахховккӑ аппаратне çеç мар, – хресҭенсене хӑйсене те ырламалла. Мӗншӗн тесен вӗсем страхховаҭ туни усӑллӑ иккенне ӑнланса иле пуçларӗç. Тӗрлӗ инкек-синкен пулсан страхховаҭ тунӑ йапалашӑн укçа тӳллеççӗ. Ман алӑра 2 ҭыхвӑр. 1923-мӗш çулта тӗрлӗ инкек пирки 40.000 тенкӗ панӑ. Кӑçалхи, 24—25 çулхине илсен епӗр тата ытларах—156.000 тенкӗ тӳленӗ. Тен çак ҭыхвӑр пирӗн йулашки çулсенҭе инкек-синкен нумайрах тухнине кӑтартмасти? Анҭах кунта çакна калас пулаҭ: страхховккӑ ӗçӗ йӗркеллӗ пыраҭ; çавӑнпа укçа тӳллесси те вӑхӑтлӑ, тата çителӗклӗрех пулса пыраҭ. Малалла пирӗн Ӗçтӑвком тӗрлӗ инкек-синкекшӗн тӳлемелли укçана (преми) ӳстерме шухӑшлаҭ. Халиҭен епӗр ӳксе вилнӗ лашашӑн 25 тенкӗ тӳлленӗ пулсан, унпа пирӗн хресҭен лаша туйанаймасҭӗ халӗ епӗр çав 25 тенкӗ вырӑнне 45 тенкӗ тӳллемелле тӑвас тесе ыйту хускатрӑмӑр. Ун пирки Патшалӑхӑн Тӗп страххованийӗ пире пулӑшӗ тесе шухӑшлатпӑр; вара епӗр 45 тенкӗ тӳллессине пурӑнӑçа кӗртме пултарӑпӑр.

## Промышлӗннӑç.

Халӗ, йулташсем, çак 5 çул хушшинҭе епӗр промышлӗннӑç ӗçӗпе мӗнтуни çинҭен калӑпӑр. Промышлӗннӑçа хӑпартас ӗçре епӗр нумайах тӑваймарӑмӑр. Пирӗн ку таранҭенех ӗçлеймесӗр ларакан претприйаттисем те пурха.

Анҫах ку, йулташсем, Ӗҫтӑвкомпа унӑн оркӑнӗ—Комун пайӗ тӑрӑшманнинҫен килмест. Ҫук: епӗр халӗ ҫителӗклӗ укҫа-тенкӗ тытаймастӑпӑр, пирӗн ӗҫри мул пӗҫӗкҫӗ, тата тӗп мул та ҫук. Тӗп мулсӑр; пӗҫӗк ӗҫри мулпа епӗр пирӗн йухӑнса ишӗлсе аннӑ промышлӗннӑҫа хӑвӑртах тӗреклетме пултараймастӑпӑр. Ҫапах епӗр ҫакна калама тивӗҫлӗ: мӗнле йӑвӑр пулсан та, пирӗн ҫылай пысӑк претприйаттисемех пӗр тӑтӑшах ӗҫлеҫҫӗ. Сӑмахран „Йетинствӑ“ хапрӑкӗпе, Йетӗрнери ҫу ҫапакан савӑтах илер. Вӗсен ӗҫӗ, йулташсем, наҫар мар, ӑна ҫак ҫыхвӑрсем кӑтартаҫҫӗ: Йетӗрнери ҫу савӑҫӗ вӑрҫӑҫен 13—14-мӗш ҫулсенҫе 263.000 пӑт ҫулӑ вӑрӑсем ҫапнӑ. 1920-мӗш ҫула илсен вӑл 62.000 пӑт ҫуллӑ вӑрӑсем ҫеҫ ӗҫлесе кӑларнӑ; хӑвӑр та куратӑр—варҫӑҫенхинҫен темиҫе хут кайине. 1924—25 ҫулсенҫе вӑл савӑт ӗнтӗ, вӑрҫӑҫенхипе танах ӗҫлесе пыра пуҫланӑ.

Халӗ ҫав савӑт мӗн ҫухлӗ ҫу ҫапса кӑларни ҫинҫен ак ҫак ҫыхвӑрсем калаҫҫӗ: 20-мӗш ҫулта унта 8.787 пӑт, 23—24 ҫулсенҫе 40.000 пӑт кӑларнӑ; 24—25 ҫулсенҫе вара малтанхи ҫур ҫул ҫеҫ 50.000 пӑт ҫапнӑ. Олиф виҫине илсен 20-мӗш ҫулта 12.872 пӑт кӑларнӑ, 23—24-мӗш ҫулсенҫе 7.000 пӑт ҫеҫ—пӑртак ҫакаӗ; 24—25 ҫулсен малтанхи ҫур ҫулӗнҫе 30.000 пӑт кӑларнӑ. Малалла сире тата 2 ҫыхвӑра асӑрхаттарам. Савӑтри пӗр ӗҫлекенпе слушӑшҫийе мӗн ҫухлӑ ҫӗрӗ тавар (сырйо) тивнӗши? 1913—14 ҫулта кашни ӗҫлекенпе слушӑшҫийе 2.340 пӑт тивнӗ; 1923—24 ҫулта пӗр ӗҫлекен 1.392 пӑт ӗҫлесе кӑлармалла пулнӑ; 1924—25-мӗш ҫулсен малтанхи ҫур ҫулӗнҫе вӑл ҫыхвӑр 1.866 пӑта ҫитнӗ. Плана пӗтӗмпех пурнӑҫа кӗртес тӗлӗшпе илсен ҫыхвӑр вӑрҫӑҫҫенхине йахӑнах пыраӗ. Ҫак ҫыхвӑрсем тӑрӑх, йулташсем, пирӗн промышлӗннӑҫ ҫӗкленни курӑннӑ пек; анҫах аплах мар ҫавха. Халӗ ку претприйатти епӗр ӑна тума пама пулнӑ кретитшӑн ӗҫлет. Кунта, йулташсем, темиҫе ҫул ӗнтӗ претприйаттине тӳрлетмен, йусаман. Кӑҫалхи ҫул пирӗн Комун пайӗ ӑна тӳрлетеймесен (тӳрлетӳ ӗҫӗ пысӑк укҫа ыйтаӗ), епӗр ҫентӑртан ҫав претприйаттийе сарса; тӗпри мулне ӳстермешкӗн пулӑшу илеймесен, вӑл хупӑнма та пултараӗ. Урӑх претприйаттисен пурнӑҫӗ те ҫавнашкалах. Илӗпӗр „Йетинствӑ“ хапрӑкне, илӗпӗр пирӗн вӑрман савӑҫӗсене, пурте вӗсем, йулташсем, укҫа тенкӗ ҫук пирки аран аран сывлаҫҫӗ. Ҫапла ӗнтӗ ку тӗлӗшпе пирӗн Ӗҫтӑвкомпа унӑн оркӑнӗ—Комунпайӗн нумаӗ тӑрӑшмалла пулаӗ.

Хаҫ илӗпӗр пирӗн вӑрман промышлӗннӑҫне. Вӑл хаҫхи хӗсӗк пурнӑҫра сахал укҫа тенкӗпе йепле сарӑлса пыраӗши? Ҫӑн, йулташсем, вӑрҫӑҫҫенхипе танлаштарсан пирӗн вӑрман промышлӗннӑҫӗ ытла та кайа йулнӑ. Анҫах ҫапах та ҫак 2—3 ҫул хушшинҫе, вӑл йерипен сарӑлса пыра пуҫларӗ. Ӑна ак ҫак 2 ҫыхвӑртан курма пулаӗ: 1924 ҫулта пирӗн Оплӑҫра 2 претприйатти ҫеҫ ӗҫлеҫӗҫ пулсан, каҫал—1925 ҫулта 4 претприйатти ӗҫлет. Вӑл претприйаттисенҫе ӗнтӗ айаккалла ӑсатмалӑх та ҫӗрӗ тавар хатӗрлеҫҫӗ. Ҫак йулашки ҫул пирӗн Ҫӑваш Вӑрман тресҫӗпе вӑрман пайӗ, хӑйсен ӗҫӗсене 100%-ах тултараймасан та, ҫирӗп ура ҫине тӑҫӗҫ тесе каламалла. Ҫитес ҫул епӗр пирӗн вӑрман промышлӗннӑҫӗ тата лайӑхрах сарӑлса пырӗ тесе шанатпӑр.

## Електритсӑласси.

Халӗ тата електритсӑласси ҫинҫен пӗр-ик сӑмах. Електритсӑлас тӗлӗшпе епӗр хамӑрӑн Ҫӑваш Оплӑҫӗнҫе мӗн тунӑши? Вӑл тӗлӗшпе, йулташсем,

нумай сӑмах вакланҫӗ, нумай ҫырҫӗҫӗ; хаҫат странитсисем ҫинҫе епӗр тӑтӑшах електритсӑласси ҫинҫен вулаттӑмӑр.

Кунта епӗр каллех калӑпӑр: пирӗн Ҫӑваш Оплӑҫӗ, халӗ Респуплӗк, ытти пуйан кӗпӗрнесемпе танлаштарсан, вӑл тӗлӗшпе те кайа йулнӑи тен. Хамӑрӑн мӗн пур хуласене ҫеҫ електритсӑлас тесен те пире питӗ нумай укҫатенкӗ кирлӗ. Пирӗн ҫулленхи тефитситлӑ пӳтшегран епӗр електритсӑ ӗҫӗ ваҫҫи укҫа параймастӑпӑр. Выҫлӑх йулашкисемпе кӗрешнӗ ҫух епӗр, тӗпри оркӑнсем пулӑшнипе, Шупашкарпа Ҫӗрпӳре пысӑках мар никӗс хурса хӑвартӑмӑр. Анҫах вӑл ҫеҫ питӗ сахал, йулташсем. Шупашкара електритсӑласси ҫак йулашки вӑхӑтра ҫеҫ йӗркеллӗ майланса кайрӗ. Унтан кӑҫал Ҫӗрпӳре, Марпоссата електритсӑларӑмӑр; тата Йетӗрнене електритсӑлас тетпӗр. Пирӗн Комунпай планӗпе епӗр тата халӑх йышлӑ пурнакан пунктсене Канаш стансине, Вӑрнара, Йӗпреҫе, тата Урмара електритсӑламалла. Анҫах ку ӗҫ калама ансат, пурнӑҫа кӗртме ӑна йӑвӑртарах. Хаҫ ҫав стантсӑсене електритсӑлас тесен пире 500 пин тенкӗрен кайа кирлӗ мар; укҫа пирӗн Ҫӑ аш Оплӑҫӗнҫе ҫук. Ҫӑнах та пирӗн халӗ тепӗр оркӑн—Електротрест пур, вӑл тупӑшлӑ оркӑн. Епӗр хаҫ кунти елекритсӑ стантсине те, уйесрисене те, Електротрест шутӗнҫен тытса тӑратпӑр. Анҫах ҫапах та капла ҫеҫ пулӑшнипе пирӗн Ҫӑваш Респуплӗкне електритсӑлама май килмест.

## Сутуилӳ.

Халӗ ӗнтӗ епӗ сутуилӳ ӗҫӗсем ҫинҫен калама тытӑнатӑп.

Ҫӑваш респуплӗкӗнҫе сутуилӳ ӗҫӗ мӗнле пыраҫха? Мӗнле суттукалатпӑрха епӗр? Економин ҫӗнӗ политтӗ ӗ умӗн пирӗн Оплаҫре сутуилӳ пулманпа пӗрех. Пулнӑ пулсан та вӑл вӑхӑтра пирӗн копперттивла сутуилӳ уҫрештенисем халӑха мӗн кирлине тӑратма пултарайман. Йулашки вӑхӑтра, ҫителӗклех мар пулин те, пирӗн патшалӑх сутуилӳ уҫрештенисемпе копперативсем ӳсе пынине лайӑхах куратпӑр. Вӗсен тӗп капитталӗ те, ҫавранӑш укҫитенки те ӳсе тӗрекленсе пыраҫҫӗ.

Тепӗр йенҫен пӑхсассӑн пирӗн уйрӑм усламҫӑсем те вӑйлӑха. Ҫапах та иртнӗ ҫулхипе танаштарсассӑн халӗ ӗҫ уйрӑмах, урӑхла тӑрать.

Иртнӗ ҫул усламҫӑсем ҫӑваш сутуилӳне 75% таран хӑйсен аллинҫе тытнӑ. Кӑҫалхи ҫул ку хисеп улшӑнсах пырать. Анҫах пирӗн сутуилӳ 60% таранах усламҫӑсем, уйрӑм сутӑҫсем аллинҫе. Сутуилӳ ӗҫӗ кун пек тӑни—киревлӗ, савӑнтаракан йапала мар. Епӗр ӑна пӗр пытармасӑрах калатпӑр. Укҫатенкӗ (финанс) оркӑнӗсем пӗлтернӗ тӑрӑх, халӗ пирӗн патшалӑхпа копператси сутуилӗвӗ усламҫӑсеннинҫен вӑйлӑрах ӗҫле пуҫлани курӑнать. Копперативсем рынӑка хӑйсене ҫаварса илеҫҫӗ. Ҫи йулашки хисепсем тӑрӑх пирӗн сутуилӳ усламҫӑсем аллинҫе 52% ҫеҫ курӑнать. Ку хисеп тӗрӗсех те мар пулӗ. Анҫах епӗр шанҫӑклах ҫакна калатпӑр. Пирӗн патшалӑх сутуилӳ уҫрештенисемпе копперативсем вӑйлансах пыраҫҫӗ. Вӗсен ӗҫӗсем хулленех сарӑлса ҫитеҫҫӗ. Ку тӗлӗшпе пирӗн, Ӗҫтӑвкомӑн, Профсойус тата Партти Оркӑнӗсен ҫи паллӑ ӗҫӗ—халӗ вырӑнти пуҫламӑш копперативсене ытларах йышлӑлатасси пулса тӑрать. Хамӑр копператтив ӗҫне майласа йараймасан, усламҫӑсем аллинҫен сутуилӳ ӗҫне хамӑра илмесен, епӗр тата та ҫылай уксаклӑпӑр. Ҫӑнах

ку тĕлĕшпе те пирĕн кăшт савăнтаракан хисепсем пур. 1921—22-мĕш çулсенҫе пĕтĕм Ҫăваш оплăçĕпе 73 копператтив (потрепитĕлски) пулнă. Халĕ пĕтĕм Ҫăваш респуплĕкĕпе 140. Копператтивсем икĕ хут ытла ӳснĕ.

Тепĕр йышши копператтив пĕрлешĕвне илсен, ĕç тата лайăхрах пек туйăнаҫ. Пирĕн Происвотсойус аллинҫе те копператтивсем пур. Халĕ пĕтĕм Ҫăваш респуплĕкĕпе 23.580 çын копператтива ҫлена кĕнĕ шутланаҫ. Иртнĕ çул 12.000-тен те сахалҫĕ. Копператтива хресҫенсене ытларах кĕртес ĕç те ҫылайах майланнă.

Пирĕн пур тĕрлĕ копператтивсене те пĕрлештерсен, вĕсен мĕн пур каппиталĕ 1.407.000 тенкĕ шутланаҫ. Вĕсенҫен Ҫăваш Потрепсойусĕн 139.576 тенкĕ, вырăнсенҫи потрепиттĕлски копператтивсен—77.000 тенкĕ, Происвотсойусăн Тĕп пĕрлешĕвĕн 398.675 тенкĕ, вырăнсенҫе—92.339 тенкĕ хисепленет. Ку шута тĕрлĕ панккăсенҫен кивçен илнĕ укçасем те кĕреççĕ. Копператтивсен ĕçне тата та майлас тесен, вĕсене пирĕн ытларах кретит парас пулаҫ. Унсăрăн копператтив ĕçне нимĕнле майпа та малалла йараймăпăр

Çак тĕлĕшпе Ҫăвашĕçтăвкомĕ хамăр респуплĕкре, йалсенҫи копператтивсене пулăшса тăма, Пĕтĕм Совет çĕрĕнҫи Копператтивсен панкĕн (Всекобанк) уйрăмне уçас, тет.

Çавăн пек пирĕн респуплĕкре коппературипе сутуилӳ ĕçĕ.

## Халăха вĕрентес ĕç.

Пирĕн пысăк ĕçсенҫен пĕри—вĕренес ĕç. Епĕр хамăр йалхуçайствипе промышлĕнăçе çĕклесси, хресҫенсене куҫттурă çулĕпе илсе пырасси—вĕренӳ ĕçĕсĕр пулмасҫ. Çавăнпа вĕренес ĕç çине Ҫăвашĕçтăвкомĕ питĕ тĕплĕ пăхма тăрăшаҫ. Ку ĕçе йĕркеллĕ йама ҫылай укçа-тенкĕ панă, хамăр шкулсене тата ытти çут ĕç ӳҫрештенисене ытларах сарас, йышлăлантарас, тенĕ. Анҫах Ҫăваш респуплĕкне кирлĕ таран ĕçе туса çитереймен. Халĕ пĕтĕм Ҫăваш респуплĕкĕпе шкулсем тата ытти куҫтçут ӳҫрештенисем 689 таран шутланаççĕ. Вăл сахал. Пирĕн шкула каймалли аҫа 90.000-не йахăн. Вĕсенҫен 48.984-шне çеç шкулсенҫе вĕрентме пултаратпăр. Пирĕн аҫасенҫен çурри (50%) шкул тулашĕнҫе тăрса йулаççĕ. Питĕ шухăшлаттараҫ ку ыйту. Пирĕн шкулсене йышлăлатмаллах. Çав хушăрах пирĕн вĕренгекенсене те йышлăлатмалла, вĕсене лайăхлатмалла. Октăпĕр револҫутсинҫен пуçласах пирĕн ӳҫитлĕсем çителĕклĕ мар, тата пуррисем те пурте йурăхлă мар. Нумайĕшĕ вĕсенҫен ĕлĕкхи меттăтсемпе вĕрентме хатĕрленнĕскерсем, çĕнĕ йухăмсене—çĕнĕ йĕркесене пĕлмеççĕ. Вĕсем пирки Ҫăвашĕçтăвкомĕпе халăха вĕрентес ĕçе пăхса тăракан оркăна—Опл.çутпайне ҫылай шухăшлама тиврĕ. Пĕр йенҫен—комисçисем туса ӳҫитлĕсем мĕнле пĕлнине сăнаса, тĕрĕслесе тухма тиврĕ, тасатрĕç те, тепĕр йенҫен—вĕсене тĕрлĕ курссене пухса вĕрентрĕмĕр. Тата çĕнĕрен те петакоки институҫĕпе Петтехнĕккăмсенҫе вĕрентсе çĕнĕ ӳҫитлĕсем хатĕрлерĕмĕр.

## Аслă шкулсенҫи ҫăвашсем.

Халĕ хамăр хушăра ĕçлес çынсене вĕрентсе хатĕрлесси пирки те пăртак калас тетĕп. Ҫăваш хресҫен аҫисене Рапфакра, Совпартшкулта, Петтех-

нĕккăмсенҫе, 2-мĕш сыпăк шкулсенҫе вĕренсе тухакансене тĕрлĕ аслă шкулсене (Университет, Институт, Технĕккăм, тата ытти—Вуз) вĕренме йаратпăр. Ку тĕлĕшрен епĕр савăнсах, кăмăлтанах ҫакна калатпăр:

Ĕлĕк вăрҫăҫҫен ҫăвашран аслă шкулсенҫе вĕренекен 10 ҫынран ытла пулман. Халĕ пысăк аслă шкулсенҫе 373 ҫын вĕренет. Кăҫал ку хисеп 430 ра ҫитрĕ. Ку хисеп пире савăнтармаллах, вăл пире йăпатать. Пирĕн ҫĕнĕрен хамăрăн ăстасем, хĕрлĕ уҫитлĕсем, акрономсем, вăрман ăстисем, тухтăрсем вĕренсе хатĕрленеҫҫĕ. Ку таранҫҫен пирĕн ăстасем (спец) сахал пулҫĕҫ пулсан, малашне—2—3 ҫултан—вĕсем ҫителĕклĕ пулаҫҫĕ. Вĕсем Ҫăваш респуплĕкĕнҫе ĕҫлемеллех. Тивĕҫлипех ĕҫлĕҫ, ĕҫлеме хушăпăр та.

Ку ҫĕнĕ вăй, патварăн, ҫамрăк Ҫăваш респуплĕкне ҫĕнетсе малалла йама пулăшмаллах. Ҫăваш хуҫайствине ҫĕклесе, ҫăваш кулҫтурине тăвас ĕҫ—вĕсем ҫине те уртăнать.

## Сывлăха сыхлассси, тата ытти.

Йултăшсем, малалла ҫавăн пĕкех ҫăваш сывлăхĕ, сут ĕҫĕ пирки, тата ытти ҫинҫен те каламалли нумай. Анҫах халĕ вĕсем ҫинҫен калама вăхăт ҫитмест. Ҫапах ик-виҫ сăмахпа та пулин, кĕскен ҫакна асăнам.

Сывлăха сыхлас ĕҫ пирĕн респуплĕкре ҫителĕклех, тата йĕркеллĕ пулса пыраймасть. Пирĕн полҫнитсăсем, аптексем, фелҫтшăр пунктисем питĕ сахал.

5 ҫул хушшинҫе, ҫак йенҫен те пăртак ӳсĕм сисĕнет—епĕр ҫĕнĕрен 7 полҫнитсă уҫнă. Ҫитҫĕ—вăл питĕ сахал. Ҫапах, пирĕн респуплĕкшĕн 7 ҫĕнĕ полҫнитсă уҫни—питĕ пысăк угăм.

Сывлăха сыхлас ĕҫе майлă йарас тесен, пирĕн полҫнитсăсене тата 100% таран ытла йышлăлатмалла. Ҫавнашкалах тухтăр, фелҫтшăрсене те, ыттисене те нумайлатмалла. Тата халăха сывлăх ҫинҫен вĕрентме, полҫнитсăри пулăшусăр пуҫне ҫир-ҫĕртен сыхланассине халăх хушшине сарас тĕлĕшпе ĕҫлекенсене (вĕрентекенсене) те хатĕрлес пулать.

## Пирĕн пӳтшет, тата пулăшу ыйтни.

Сывлăх ĕҫне ҫĕклеме, полҫнитсăсене йышлăлатма патшалăх пулăшу памасăр тума пултараймастпăр. Вырăнти пӳтшет (укҫа-тенке) ҫине ҫеҫ шанма ҫук. Пирĕн пӳтшет 58—60% таран тефитситлă (тупăш тăкака ҫурри те саплаймасть). Мĕн пур ҫĕрĕҫ, вĕренӳ, промышлĕнăҫ, тата ытти ĕҫе хамăр укҫапа тума вăй-хал ҫук пирĕн.

Ку таранҫҫен епĕр Ĕҫлекенсемпе Хресҫенсен Правиттĕлстви тĕпрен (ҫенттăр) пулăшнипе кăна тытăнса тăратпăр. Малашне те вăл пире пулăшмасăр тăмĕ. Анҫах пирĕн хамăрăн та, хамăр сывлăха сыхлас ĕҫе хаҫтерех лайăхлатасси пирки, шухăшлас пулать.

Ĕҫхалăхĕн хайĕн, хайне кирлĕ ĕҫне майлама, мĕн пур вăйа хумалла.

## Малалли ҫулсем.

Ҫак малтан каланисем тăрăх епĕр питĕ кайа тăрса йулни, епĕр ҫухăнни аванах курăнать. Ҫăваш йалхуҫайствине, промышлĕнăҫе, кустарсен ĕҫне

çĕклес тĕллĕн, ҫăваша вĕрентсе ĕçе лайăхрах майламашкăн, сывлăха сыхлассине çителĕклĕ туса тăмашкăн пире пурлăх, укçа-тенкĕ питĕ нумай кирлĕ. Пирĕн малалли утăмсене ваҫҫи никĕс—екkономикkă йенҫен лайрăхрах тĕкĕ кирлĕ. Вăл пирĕн çук. Ăна тăвас пулаť. Ҫăвашĕçтăвкомĕ кун çинҫен нумай шухăшларĕ. Ҫăнах, ку ҫухăнлăхран, çĕр тăвăрлăхĕнҫен, тефитситлă (тăкак тупăшран ытларах) пӳтшетран çăлăнса мĕнле пурăнăçа пурлăхлă тăвасха? Çав тумалли çула епĕр тупрăмăр.

Ку çул вăл—пирĕн оплăçе респуплĕк туса, унăн ҫиккисене сарасси. Кун пек тума пире кирлех. Ку ĕç пирĕн йалхуçайствине те, пурлăха ытти йенҫен те çĕклесе—ҫăвашсен пурнăçне малалла йама пулăшаť. Анҫах епĕр ĕмĕтленнĕ ĕмĕте пĕтĕмпех пурнăçа кĕртеймерĕмĕр. Епĕр ҫыллайах ыйтнăҫҫĕ. Ҫĕмпĕре пуçхула туса, Самар кĕпĕрнинҫен те пĕр уйесне хамăр респуплĕке кĕртесшĕнҫĕ. Анҫах ку прокрамăрах (максимум) пирĕн ҫылайах ҫакма сахаллипех (минимум) килĕшме тиврĕ. Сахалли вăл акă çакăн пек:

Ҫăваш респуплĕкне Улатăр хулине, Улатăр уйесĕнҫен 5 вулăс, тата Пăва кантунĕпе Уҫйанăвск уйесĕнҫен хăшхăш ҫăваш йалĕсем кĕмелле. Ку ĕç çителĕклех татăлманха. Çапах, татăлсан та—сахалли сахалах—кун пек çеç аслăланни пирĕн пурлăха çителĕклĕ çĕклеймест. Ăна—пурнăç çулĕнҫи никĕс (эконом. база) темех çук. Çавăнпа епĕр хамăр вăйпах промышлĕнăçе сарма, хамăрах фапрăк-савăтсем лартма, йалхуçайствине çĕклеме пултараймастпăр. Çапах та пăртак сахалли те пире пулăшу памаллах. Сăрă вăрманĕ, темиçе вăрман савăҫĕ тата урăх претприйаттисем пирĕн алла куçаççĕ.

Оплăçе пысăклатса ăна респуплĕк тăвасшăн тăрăшнă хушăрах пирĕн умра тата тепĕр ыйту тăҫĕ. Мĕнле çăлăнмаллаши пирĕн çĕртăвăрлăхĕнҫен? Йепле майпа çĕклесха промышлĕнăçа?

## Йалхуçайствине çĕклесси.

Çĕр тăвăрринҫен хăтăлас тесе, пирĕн хăшхăш çемйесене урăх вырăна (çĕнĕ çĕре) куçарасши, çукши? куçармасăрах ытти майсемпе майлашма çукши? Урăх çĕре куçарас шухăша хăвармасăрах, халĕ епĕр хамăр йалхуçайствине çĕнĕ майсемпе ĕçлесе ытларах тупăш паракан (интенçификатси) тăвассине нимрен хакла хуратпăр. Халĕ ҫăваш хресҫенĕ теçеттинран 30—40 пăт çеç тырă илет пулсассăн, малашне 80—120 пăт илекен тăвас пулаť. Хресҫен халĕ сухапуçпе ĕçлет, плукпа ĕçлекен тăвас, вырăнăн вырăнăн пĕтĕм йал çĕре трактăрпа сухаланмалла пултăр. Ку ĕмĕтсем—тĕлĕкри шухăш—пулас çук ĕç (утопи) çеç мар. Пирĕн çав çул çине утса тухмаллах. Унта тухма епĕр пур вăйпа тăрăшатпăр. Хаҫхи ҫăваш ĕни сĕт сахал параť. Урăх ăратлă ĕне усрама тытăнмалла. Пур çĕрте те пирĕн çĕнетмелли пур, нумай... Хамăр выҫăх-ҫĕрлĕхе шултралатасси те—çĕрйĕркелӳ ĕçне татмасăр, нумай пусăллă уйа куçмасăр пулмасť. Нумай пусса куçмасăр епĕр малалла ӳсĕмлĕ утайас çук.

Тĕпĕçтăвком (ВЦИК) Комиççийĕ, кăçал оплăçе килсе, пирĕн пурлăх ĕçне пăхса тухнă хыççăн, оплăçрен 25.000 хуçайствăран кайа мар урăх çĕре куçармалла, терĕ. Çавăн ҫул хуçайства куçарни—комиççи шуҫĕпе, ĕçе татаť. Вăл екkономи тĕлĕшĕнҫен пулăшу памалла пек. Анҫах ку ĕçпех ĕç татăлмасť. Ҫăваш респуплĕкĕнҫен кăçал 5000 хуçайствă кăларса ывăтсассăн,

килес ҫул 5000, тата малалла ҫапла туса пынипе ҫӗртӑвӑрлӑхӗнҫеп епӗр, хӑтӑлаймастпӑр. Пирӗн тата халӑх ҫулленех ӳссе пырать. Тепӗр 5 ҫултан 16.000 ҫын хутшӑнать. Вӗсене те кӑларса ывӑтма тивет.

Ҫавӑнпа та епӗр хуҫайствӑна интенҫификатси ҫулӗ ҫине тӑратасшӑн. Ку ыйтӑва епӗр тӗпри правиттӗлства пӗлтерне. Унтан епӗр ку ыйту ҫине тӗплӗрех пӑхма ыйтатпӑр.

Ку ӗҫе тума 16 мӗлйун тенкӗ укҫа ыйтрӑмӑр. 16 мӗлйунпа ҫылайах малалла кайма пулать.

## Промышлӗннӑҫе ҫӗклесси.

Каллех промышлӗннӑҫ ҫинҫен пӑртак калам. Промышлӗннӑҫ пирӗн ӳкнине, вӑл мӗнле уксахланине илтрӗр, пӗлеттӗр те. Халӗ ҫӗнетесси ҫинҫен шухӑшлар. Малтанах хамӑрӑн мӗн пур пек претприйаттисене ӗҫе йамалла. Хӑшне йусас пулать, хӑшне ҫӗнӗрен лартмалла. Ку тӗлӗшрен те епӗр тӗпрен пулӑшмасӑр малалла кайас ҫук. Хамӑр претприйаттисене ӗҫлеме йурӑхлӑ тума, йусама, фапрӑк-савӑтсен тӗп кӑпитталне ҫирӗплетме 3 мӗлйун тенкӗ кирлӗ. Вырӑнти хуҫайствӑ уйрӑмӗ Ҫӑвашӗҫтӑвкомӗ ку тӗлӗшрен ӗҫлекеленӗ.

Епӗр ыйтнине Халӑх Хуҫайствин Тӗпри Аслӑ Канашӗ йышӑннӑ, План Комиҫҫи те тиркемен—проектӑсене йышӑнса, Халӑх Комиссарӗсен Канашне ҫирӗплетме панӑ. План Комиҫҫи йышӑннӑскер пурнӑҫа кӗмеллех, шанса тӑратпӑр.

## Аласталах ӗҫӗ.

Алӑсталӑх ӗҫӗ—(кустарная промышленность) пирӗн каллах наҫар. Алӑсталӑх ерттелӗсем вӑй илеймесӗрех тӳнсе пыраҫҫӗ. Вӗсене ура ҫине тӑратас, вӑй парас пулать. Кунта та кӑпиттал кирлӗ.

Ҫӑпта ӗҫне илсе пӑхар. Ку ӗҫ ҫӑвашсемшӗн тупӑшлӑ. Анҫах ку ӗҫ ӗҫлекенсене ҫӗртет, хресҫен аҫисен сывлӑхне ҫийет, ҫапах вӗсене пурӑнмаллӑх ним те параймасть. Ку ӗҫе йӗркелемелле. Сийенлӗхсенҫен пӑртак та пулин сирӗлмелле. Тӗпри уҫрештенисенҫен ҫӑпта ӗҫне тата алӑсталӑх ӗҫӗсене майласа йама пулӑшу ыйтрӑмӑр. Тӗпӗҫтӑвкомран ҫӑваш пурлӑхне сӑнама килнӗ комиҫҫи те ку ӗҫе ҫӗклеме—300.000 тенкӗ 9 уйӑхлӑха кретит пама кирлӗ, тенӗ. Епӗр калатпӑр: 300.000 пире сахал, унпа нимӗн те туса ҫитерейес ҫук, 9 уйӑхра ку ӗҫе ура ҫине тӑратаймӑн—пире 1.020.000 тенкӗ таран кирлӗ, нумай срукла кретит та пулин парӑр, тетпӗр.

Ҫапла ӗнтӗ, йулташсем, Ҫӑвашӗҫтӑвкомӗ умӗнҫе ҫавӑн пек виҫӗ пысӑк ӗҫ тӑҫӗ. Ҫӑваш республӗкӗн пулас правиттӗлстви умӗнҫе те вӗсемех тӑмалла. Вӗсене тӑвасах пулать. Пирӗн ҫитес ҫулсенҫех йалхуҫайствине, ҫӗнӗ майсемпе ӗҫлесе, ытларах тупӑш паракан тумалла. Промышлӗнӑҫе ҫӗклемелле, тата алӑсталӑх ӗҫне ытларах ӳсме пулӑшмалла. Ку таранҫен шаннӑ пекех, епӗр ку ӗҫсене майлама шанса ӗҫлетпӗр. Йӑвӑрлӑхсем пулҫӗҫ, вӗсем ҫылай, тата та пулӗҫ. Анҫах йӑвӑрлӑхсемпе кӗрешме пурӗ пӗрлешӗпӗр. Нимрен малтан хамӑрӑн тӗпри уҫрештенисенҫе те, уйессенҫи, вулӑссенҫи, йалсенҫи ӗҫлекенсем хушшинҫе лайӑх ҫыхӑну пултӑр. Профсойус, партти, комсомол орканисатсийӗсем те, уйрӑм ҫленӗсем те пӗрлешсе пӗр ӗҫе хастарлӑ туса пырӑпӑр.

Пирĕн хушăра ĕçе пурте харпăрхăй майлă тăвасшăн турткалашса тăрсан, ĕçе пĕрлешсен пĕр планпа пурнăçа кĕртессшĕн пулмасан—çак асăннă ĕçсене пурнăçа кĕртейес çук.

Кĕскереххĕн каласан Ђăвашĕçтовкомĕпе пирĕн ытти уђрештенисем хĕрӳллĕн пысăк ĕçе тытăнђĕç. Вĕсем ђăваш пурлăхне, унăн хуçайствине, ăна вĕрентес ĕçе çĕклесшĕн кĕрешсе ĕçлеççĕ. Хăш пĕр ĕçне тума ĕлкĕрвĕ, туса çитерменни тата нумай. Пире тата 10 çул хушши ĕçлеме те çитет пулĕ ку ĕç. Анђах алла сулса ларас çук, пирĕн пĕр тĕлленĕ вырăна, çитес тенĕ çĕре çитме туртăнасах пулаĭ.

Пурĕ пĕрле ĕçлесессĕн, çитес çĕре çитетпĕрех.

Сывă пултăр мăшкăлра пурăннă ваѣ халăхсене, ирĕк панă Йупа уйăхĕвђи револутси! Сотсиалисăмпа Совет Республĕкĕсен Сойусĕ сывă пултăр! Вăл тĕрекленнĕçем тĕрекленсе пытăр! Сывă пултăр Ђăвашсен Ахтономиллĕ Сотсиалисăмпа Совет Республĕкĕ!

Сывă пулђђĕр, вăйлă тĕреклĕ ĕçлетђĕр Ђăваш Республĕкĕнђи хамăр ĕçхалăхĕшĕн тăрăшакан йулташсем!

*(Пурте вăрах алă çупаççĕ, мусăк, Инттернатсионал кĕввине выђђатĭ).*

---

## Токлат хыҫҫăн йышăннă ресоӆутси.

Ҭăвашĕҫтăвком претҫетаттĕлĕ Илларионăв йулташ Ҭăвашĕҫтăвкомĕн 5 ҫул хушшинҭи ĕҫĕсем ҫинҭен тунă токлата итленĕ хыҫҫăн, Ҭăвашĕҫтăвкомĕн ҭаплă саҫҫетанийĕ ĕлĕк патша вăхăтĕнҭе хĕнхурта пурăннă ҭăваш ĕҫхалăхĕ халĕ политтĕк, Совет ĕҫне хутшăнса пыма пултарнине курса ҫакна калаҫ:

Ҭăваш ахтономийĕ еккономи тĕлĕшĕнҭен, промышленнăҫ, йалхуҫайстви, тата ытти йенҭен, хуллен майпа пулсан та, малаллах кайаҫ, сотсиалисăма ўстерес ҫула тухаҫ. Куӆтгурă тĕлĕшĕпе ҫамрăк респуплĕк патша вăхăтĕнҭи ҫулсенҭен питĕ инҫе малалла карĕ. Халĕ, Комуниссен парттийĕ йертсе пыракан Совет влаҫĕн ирĕкĕпе, Ҭăваш Респуплĕкĕнҭи ҫамрăксем ҫултан-ҫул нумайран нумай вĕренсе, хăйсен вăйĕпе наукка урлă ĕҫхалăхне пулăшма пултараҫҫĕ.

Ҭăваш ĕҫхалăхĕ Ҭăваш оплăҫĕ 5 ҫул тултарнă кун пур натсисемпе пĕрле хăйне кăпиттал аллинҭен ĕҫлекен клас, пролеттариат, тата пĕтĕм Совет Респуплĕкĕсен Сойусĕнҭи Комуниссен парттийĕ Ленин йертсе пынипе хăтарнине лайăхах астуса тăраҫ.

РКП темиҫе вун ҫул хушшинҭе Ленин лайăх йертсе пынипе мĕн пур вак халăхсене сăнҭăртан хăтарса, куӆттурăна комунисăм ҫулĕ ҫине тăратрĕ.

Хăйсен ахтономи пилĕк ҫул тултарнă кун ҭăваш ĕҫхалăхĕ пĕр иккĕленмесĕрех ҫакна калаҫ:

— Хамăрăн ҫамăк респуплĕке куӆттурăпа еккономи тĕлĕшĕнҭен малашне тĕреклентерсе, аталантарса йамашкăн хамăр вăйа виҫĕ хут, вунă хут та ытларах хурăпăр.

Ҫав хушăрах респуплĕк пулăшассине. ҭăваш ĕҫхалăхне хăвăртрах пĕтĕм тĕнҭери пролетгари ҫемйине тивĕҫлĕ кĕме ҫителĕклĕ пулăшассине лайăхах шанса, ĕмĕтленсе тăраҫ. Ҫамрăк респуплĕке питĕ пысăк пулăшу кирлĕ.

Ҭăвашсен Ахтономиллĕ Сотсиолисăмпа Совет Респуплĕкĕ сывă пултăр!

Сывă пултăр Сотсиалисăмпа Совет Респуплĕкĕсен Сойусĕ!

Сывă пултăр Раҫҫейри Комуниссен (Поӆшевиксен) парттийĕ!

Сывă пултăр виҫҫĕмĕш Интернатсионал!